24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 17 ШАМАТКУН 14(6039) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Вырӑнти пичетӗн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи задачисем

Германин империалистла захватчикӗсем пуҫласа янӑ тискер вӑрҫӑ пирӗн халӑхӑн пӗтӗм пурнӑҫӗнче пысӑк улшӑнусем туса хучӗ. Ылханлӑ Гитлерӑн урнӑ йыткӗтӗвӗсене хирӗҫ пирӗн пӗтӗм халӑх, чи ҫамрӑкисенчен пуҫласа чи ваттисем патне ҫитиех, ҫӗкленчӗ. Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен пӗрлӗхӗпе туслӑхӗ нихӑҫанхи пек мар тӗреклене, никам ҫӗнтерейми хаяр вӑй пулса тӑчӗ. Вырӑсӗ, украинецӗ, белорусӗ, латышӗ, карелӗ, казахӗ, тутарӗ, чӑвашӗ тата ыттисем те халӗ пӗр аслӑ ӗмӗтпе пурӑнаҫҫӗ: пирӗн чи тискер те чи хӑрушӑ тӑшмана—нимӗҫ кашкӑрӗсене — ӗмӗрлӗхех пӗтерсе тӑкмалла.

Совет халӑхӗ туса пыракан отечественнӑй вӑрҫӑ пирӗн халӑхӑн шухӑшкӑмӑлӗнче те палӑрмасӑр иртсе каймарӗ. Совет строй чи тӗреклӗ строй пулнине, совет ҫӗршывӗ чӑннипех те пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен тӑван ҫӗршывӗ пулнине, вӑл чи демократиллӗ те чи культурӑллӑ ҫӗршыв пулнине, вӑл кӑна ӗҫҫыннисене телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса пама пултарнине отечественнӑй вӑрҫӑ уҫҫӑн кӑтартса пачӗ. Халӗ ӗнтӗ большевиксен партийӗпе совет правительствин ӗҫҫыннисен чи сывӑх интересӗсене сыхлакан пӗртен-пӗр партипе пӗртен-пӗр правительство пулнине пирӗн халӑхӑн чи кая юлнӑ ҫыннисем те ӑнланса илчӗҫ. Ҫавӑнпа та халӗ ӗҫҫыннисем кашниех хӑйсен личнӑй интересӗсене аякка тӑратса хӑварса, чи малтан государство интересӗсемшӗн тӑрӑшаҫҫӗ, фронта пулӑшассине кунран-кун вӑйлатса пыраҫҫӗ.

Паллах, обстановка улшӑннине май вырӑнти пичетӗн ӗҫӗнче те улшӑнусем пулма тивӗҫлӗ пулнӑ, мӗншӗн тесен ҫӗнӗ обстановка ун умне ҫӗнӗ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Вӑл чӑнах та вара хӑйӗн ӗҫне ҫурӑхлатса ҫӗнетрӗ. Районри хаҫатсем ытларах та ытларах фронт интересӗсемшӗн, тыла тӗреклетессишӗн тӑрӑшма тытӑнчӗҫ. Вӗсем пуринчен ытла вӑрҫӑ кӑларса тӑратакан задачӑсене пурнӑҫа кӗртес ӗҫ мӗнле пулса пыни ҫинчен ҫырма тытӑнчӗҫ.

Анчах ку енӗпе пурне те туса ҫитермен-ха. Вырӑнти пичетӗн хӑйӗн ӗҫне чылай лайӑхлатмалла, уйрӑмӑнах районри хаҫатсемпе стена хаҫачӗсен ӗҫне ҫулӗ вырӑна ҫӗклес пулать. Мӗншӗн тесен халӗ районри хаҫатсен тата стена хаҫачӗсен авторитечӗ, вӗсем ӗҫҫыннисемпе тачӑрах та оперативнӑрах ҫыхӑнса тӑнӑ пирки, вӑйлӑн ҫӗкленчӗ, вӗсене вулакансен йышӗ нумай ӳсрӗ, ҫавӑнпа вара ҫав хаҫатсен ответлӑхӗ те темиҫе хут пысӑкланчӗ. Ҫакна ӗнтӗ редакцисенче ӗҫлекен кашни работникӑн туйса тӑрас пулать.

Вырӑнти пичет умӗнче тӑракан чи пысӑк задачӑсенчен пӗри вӑл—пропагандӑпа агитаци ӗҫне вӑйлатасси пулса тӑрать. Отечественнӑй вӑрҫӑн тӗллевӗсем ҫинчен, гитлерла бандитсен тискер те хӑрушӑ ӗмӗчӗсемпе ӗҫӗсем ҫинчен хаҫатсен большевикла тӗрӗс сӑмаха кашни ӗҫҫынни патне ҫитерме тӑрӑшас пулать. Ҫапла майпа ӗҫҫыннисене фронт интересӗсемшӗн, тыла ҫирӗплетессишӗн кӗрешме, фронт валли ытларах та ытларах хӗвӗлтешал, тумтирсем, тырпул, аш-какай, сӗт-ҫу тата ытти те парса пулӑшассишӗн кӗрешме мобилизацилес пулать. Ҫӗршыв умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсене вырӑнти конкретнӑй ӗҫсемпе пӗлсе ҫыхӑнтарса пымалла. Кашни пӗчӗк ӗҫе вӑхӑтра та тӗрӗс пурнӑҫа кӗртни фронтшӑн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине ӗҫҫыннисене конкретнӑй примерсемпе ӑнлантарса памалла.

Сӑмахран, оборона фондне тӑвас ӗҫ мӗнле вырӑн йышӑнса тӑни пуриншӗн те паллӑ. Эпир ҫав фонда хывакан кашни грамм ыттӑн е кӗмӗл, кашни килограмм тырӑ е аш-какай пирӗн ҫӗршывӑн оборонине тӗреклетет, Германи фашизмне пӗтерсе тӑкас ӗҫе пулӑшать. Ҫакӑн ҫинчен райхаҫатсем хӑй вӑхӑтӗнче чылай ҫырчӗҫ. Анчах юлашки вӑхӑтра оборона фондне тӑвас, ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫ мӗнле пулса пыни ҫинчен сахал е пачах та ҫителӗксӗр ҫыраҫҫӗ. Ҫавӑн пек хаҫатсен шутне, тӗслӗхрен, «Ленин ҫулӗпе» хаҫата (Шупашкар районӗ) кӗртме пулать.

Кунта ҫакна та асӑрхаттарса хӑвармалла. Республикӑри колхозсем пурте оборона фондне мӗн чухлӗ те пулин тырӑ е ытти продуктсем пама йышӑннӑ. Анчах колхозсен председателӗсем ҫак ӗҫе хакламаннине пула, ҫав решенисем хӑшпӗр колхозсенче пурнӑҫа кӗмен: колхозниксен пухӑвӗ йышӑннӑ пулин те, колхоз председателӗ ҫав тырра оборона фондне хывас ӗҫе организацилемен. Ҫак ҫитменлӗхе райхаҫатсем чылайӗшӗсем асӑрхамаҫҫӗ. Фронта решенисемпе мар, ӗҫпе пулӑшмалла!

Хӗрлӗ Ҫар валли резервсем хатӗрлесе парас ӗҫ ҫине те вырӑнти пичетӗн уйрӑмӑнах вӑйлӑн ҫаварӑнса пӑхмалла. Ҫар ӗҫне вӗренесси, тӑван ҫӗршыва сыхлама яланах хатӗр тӑрасси—алла хӗҫпӑшал тытма пултаракан кашни гражданиншӑнах ҫирӗп закон пулса тӑрать. Ҫакӑн ҫинчен вырӑнти пичетӗн ӗҫҫыннисене анлӑн ӑнлантарса памалла. Ҫар ӗҫне вӗренесси мӗнле пыни ҫинчен хаҫатсенче тӑтӑшах ҫырса тӑмалла. Апла пулин те, чылай райхаҫатсем ку ӗҫе юлашки вӑхӑтра вӑйсӑрлатрӗҫ. Ҫӳлте асӑннӑ «Ленин ҫулӗпе» хаҫатӑн юлашки номерӗсенче ҫар ӗҫне вӗрентесси мӗнле пыни ҫинчен ҫырнӑ заметкӑсене тупса вулама хӗнтерех. Ку ҫитменлӗхе халех пӗтерес пулать.

Вӑрҫӑ условийӗсем вырӑнти пичетӗн ӗҫне чылай йывӑрлатрӗҫ. Ӗҫҫыннисен пӗр пайӗ Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑнине пула хаҫатсене ҫыракан корреспондентсен йышӗнче те, хаҫатсем илсе тӑракан ҫырусен хисепӗ енӗпе те улшӑнусем пулчӗҫ. Хаҫатсене ҫӗнӗ ҫынсем ҫырма тытӑнчӗҫ. Ҫавӑнпа та редакцисен умне тата тепӗр задача—корреспондентсемпе ӗҫлессине вӑйлатас задача тухса тӑчӗ. Ҫак ӗҫе лайӑх туса пыракан хаҫатсем, паллах, корреспондентсем те нумай. Сӑмахран, Ишлей райхаҫатне 60 ҫын ытла тӑтӑшах ҫырса тӑраҫҫӗ, вӗсен хушшинче 23 хӗрарӑм. Редакци икӗ уйӑх хушшинче пӗтӗмпе 300 ҫырӑва яхӑн илнӗ. Корреспондентсемпе 4 хут канашлу туса ирттернӗ. Ҫӗрпӳ райхаҫачӗ вара ҫак ӗҫе пачах ҫителӗксӗр туса пырать. Кунта ҫырусене шута илмеҫҫӗ, корреспондентсемпе ӗҫлемеҫҫӗ, хаҫатра редакци сотрудникӗсем ытларах ҫырса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ кунта корреспондентсен йышӗ те, редакци илекен ҫырусен хисепӗ те сахал.

Пичет работникӗсен уйрӑмӑнах тимлӗ те сыхӑлӑхлӑ пулса, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлес пулать. Хӑйсен умӗнче тӑракан задачӑсене пӗтӗмпех тата тарӑнӑн ӑнланса илсе, вӗсене пӗтӗм вӑйя хурса пурнӑҫласа пырас пулать, ӗҫҫыннисен массипе ҫыхӑнса тӑрассине нихӑҫанхи пек мар ҫирӗплетес пулать. Ҫапла ӗҫлесен кӑна вырӑнти пичет ҫӗршыв умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлас ӗҫре партипе совет организацийӗсене тивӗҫлипе пулӑшса пыма пултарать.

Фронтовой бригадӑн ӗҫӗсем

КАНАШ. Паровозсене васкавлӑн юсаса кӑларас шутпа депори ҫамрӑксем фронтовой бригада организацилерӗҫ. Бригадӑра 15 комсомолец—опытлӑ рабочисемпе ФЗО шкулӗнчи практикантсем.

— Маттур ачасем, ку ачасемпе тем те тума пулать,—тет вӗсен бригадирӗ Чоботарев юлташ.

Бригада малтанхи кунсенчех ӗҫе хӗрӳллӗн тытӑнчӗ, фронтшӑн, тӑван ҫӗршывшӑн ӗҫлес пултарулӑхне кӑтартрӗ. Январӗн 9-мӗшӗнче бригадӑна васкавлӑ заказ пачӗҫ. Ҫамрӑк патриотсем фронтри пек ӗҫлерӗҫ, паровоза 10 сехетре юсаса кӑларчӗҫ. Ҫак кун вӗсем тепӗр паровозне те кӑлартнӑ нормӑран 4 сехет малтан юсарӗҫ.

Бригада членӗсем хӑйсен умне Сталин ячӗпе тӑракан автозаводри комсомолецсем пек ӗҫлес задача лартнӑ. Нумайӗшӗсем халӗ ҫак задачӑна пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Арматурщик Ефремов, автоматчик Ермохин, Фролухин юлташсем паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Т. ИВАНОВ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухаҫҫӗ

ЭЛӖК. Районри ӗҫҫыннисем, колхозниксемпе колхозницӑсем Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ «Германи влаҫӗсем хӑйсем тытса илнӗ совет территорийӗсем ҫинче пур ҫӗрте те халӑха ҫаратса юхӑнтарни ҫинчен тата тискер кайӑкла хӑрушӑ ӗҫсем туни ҫинчен» пӗлтерсе ҫырнӑ нотӑна вуласа тухнӑ хыҫҫӑн фронта, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине ҫӗнӗрен вӑйлатрӗҫ.

Синерти Жданов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли татах та 27 тир, ҫӑматӑ, икӗ ҫӗлӗк, фуфайка, ӑшӑ кӗпе-йӗмсем пачӗҫ. Тӑшман тытса илнӗ совет районӗсенчен куҫса килнӗ Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсен арӑмӗсем виҫӗ мӑшӑр ҫӑматӑ, икӗ мӑшӑр алшиш, носкисемпе алшӑллисем пухса пачӗҫ.

Крымзарайкӑри «Коммунар» колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли 16 тир, пӗр кӗрӗк ширшак, 3 мӑшӑр ҫӑматӑ, 2 ҫӗлӗк тата ыттисене те пухса пачӗҫ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи войскӑсем 1942 ҫулти январӗн 6-мӗшпе 15-мӗш хушшинче тытса илнӗ трофейӑсем

Нимӗҫ оккупанчӑсене хирӗҫ ҫапӑҫса, Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи войскӑсем 1942 ҫулти январӗн 6-мӗшпе 15-мӗш хушшинче ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: орудисем—331, танксем—50, минометсем—155, пулеметсем—747, танксене хирӗҫ пемелли пӑшалсем—59, автоматсем—199, винтовкӑсем—4.644, автомашинӑсем—1.446, мотоциклсем—175, велосипедсем—1.039, автоцистернӑсем—21, тракторсем-тягачсем—20, грузсем тиенӗ лавсем—558, самолетсем—1, самолетсен чаҫӗсене турттарса пыракан чугунҫул платформисем—7, радиостанцисем—32, йӗнерсем—166, хирти ҫӑкӑр завочӗ—1, кухньӑсем—29, паровозсем—38, витнӗ вагонсем—136, чугунҫул платформисем—95, чугунҫул ҫинчи цистернӑсем—2, снарядсем — 59.490, уйрӑмӑн 25 вагон тата 40 лав снаряд, уйрӑмӑн 32 ещӗк снаряд, ручной гранатӑсем—5.098 тата уйрӑмӑн 22 ещӗк граната, минӑсем—18.745 тата уйрӑмӑн 48 ещӗк мина, авиабомбӑсем—700, 10 ещӗк тар, патронсем—1.882.000.

Кунсӑр пуҫне танксемпе автомашинӑсем тата мотоциклсем тиенӗ пӗр эшелон, завод оборудованийӗсемпе чугунҫул оборудованийӗсем тиенӗ пӗр эшелон, тумтирсем тиенӗ 10 вагон тытса илнӗ.

Январӗн 6-мӗшпе 15-мӗш хушшинче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсем 14.000 ҫын ытла вилнӗ, вӗсен шутӗнче пӗр генерал пулнӑ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 15-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 15-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта, вӑл шутра **Селижарово** хулине, йышӑнса илнӗ. Ҫапӑҫусенче противник техника тӗлӗшӗнчен тата уйрӑмах чӗрӗ вӑй тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳсет.

Январӗн 14-мӗшӗнче нимӗҫсенне 6 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 3 самолет пӗтнӗ.

Пирӗн карапсем Баренц тинӗсӗнче противникӑн пӗтӗмпе 11.000 тонна водоизмещениллӗ икӗ транспортне путарнӑ.

* * *

Январӗн 14-мӗшӗнче пирӗн авиачасть нимӗҫсен 3 танкне, пехотӑпа грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 50 лавне, 20 орудине прислугисемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ тата противник пехотин пӗр батальонне сапаласа янӑ.

* * *

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ Медынь хулинче Голубев юлташӑн боецӗсем, туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсенне 6 танк, 648 автомашина, 25 оруди, 49 пулемет, 130 лав, 3 трактор, автоматсемпе винтовкӑсем, снарядсемпе минӑсем тата патронсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Эрастов юлташӑн чаҫӗ (Хӗвеланӑҫ фрончӗ), тӑшмана кӗтмен ҫӗртен пырса ҫапса, нимӗҫсене халӑх пурӑнакан пӗр пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Нимӗн йӗркисӗр чакса, противник 80 автомашина, 50 лав тата нумай боеприпассем пӑрахса хӑварнӑ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче старший лейтенант Кеогарисӑн разведчикӗсем, противникӑн хуралне пӗтерсе тӑкса, нимӗҫсен ҫар склачӗсене тытса илнӗ. Трофейӑсем хушшинче — 40 автомат, 16 пулемет, танксене хирӗҫ пемелли 23 пӑшал, 12.000 снаряд, 300.000 патрон тата ытти ҫар пурлӑхӗсем.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 13 блиндажӗпе землянкине аркатнӑ, ҫӗрпе йывӑҫран тунӑ 4 огневой точкине тата пулеметсен 6 йӑвине пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна ҫити вӗлернӗ.

* * *

Аяларах эпир Ленинград облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗн командирӗн дневникӗнчен илнӗ уйрӑм вырӑнсене пичетлетпӗр.

«Декабрӗн 30-мӗш. Ҫул ҫинче тӑшманӑн икӗ грузовой машинине, нимӗҫсен 9 салтакне тата пӗр офицерне пӗтерсе тӑкрӑмӑр.

Декабрӗн 31-мӗш. Пирӗн отряд противникӑн хирти телефон ҫыхӑнӑвне татрӗ. Каҫ пулнӑ тӗле партизансем фронталла пыракан ҫулсенчен пӗрин ҫине минӑсем хурса тухрӗҫ тата вӑрманта темиҫе тӗле завалсем турӗҫ.

Январӗн 1-мӗш. Пыйтланса кайнӑ нимӗҫ воякисене паянхи кун «ҫӗнӗ ҫул кучченеҫӗ» тыттартӑмӑр. К. патнелле каякан ҫул ҫинче кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑнса, фашистсен ҫыхӑну пурлӑхӗпе боеприпассем турттарса пыракан колоннине ҫапса аркатрӑмӑр. Нимӗҫсенне 5 машина стройран кӑлартӑмӑр, тӑшманӑн салтакӗсемпе шоферӗсене 6 ҫынна вӗлертӗмӗр. Партизансем нимӗҫсен автоматне, пӗчӗк калибрлӑ минометне, 13 винтовкине тата 46 гранатине тытса илчӗҫ.

Январӗн 3-мӗш. Партизансен отрячӗ тӑшманӑн обозӗ ҫине пырса тапӑнчӗ. Лавҫӑсене вӗлерсе пӗтерсе, партизансем 3 лав утта тата горючи тултарнӑ 4 пичкене вут тивертсе хӑварчӗҫ. Каҫ пулнӑ тӗле эпир нимӗҫсен взводӗпе тӗл пултӑмӑр, вӗсем ҫине 200 метртан пеме тытӑнтӑмӑр, 10 гитлеровеца вӗлертӗмӗр».

* * *

Нимӗҫсен вилнӗ обер-ефрейторӗ Август Пресс ҫумӗнче вӑл киле тӑванӗсем патне ӑсатма ӗлкӗреймен ҫырӑва тупнӑ. Пресс ҫапла ҫырнӑ: «Раштавран пуҫласа манӑн пурнӑҫра чи хӑрушӑ кунсем пулчӗҫ. Эпир вырӑссенчен ҫӗрле, шартлама сивӗре тартӑмӑр. Хӑшпӗр ротӑсенче 10 салтакран ытла та юлмарӗҫ пулӗ. Вилнисем, аманнисем тата тӑм илсе янисем питех те нумай. Нумайӗшӗсенне аллипе урисене тӑм илнӗ. Эпӗ аран кӑна ҫӑлӑнса юлтӑм. Вырӑссем пире пӗтӗмпе пекех ҫаварса илчӗҫ. Эпир мӗнпур ҫар хатӗрӗсене: орудисемпе пӗтӗм пурлӑха пӑрахса хӑварса, хамӑрӑн пурнӑҫа ҫӑлса хӑварма тӑрӑшса, вырӑссен таначинчен пысӑк асапсемпе хӑтӑлса тухрӑмӑр».

* * *

Мускав облаҫӗнчи Слободино ялӗнче карательнӑй отрядри гитлеровецсем ялти мӗнпур хӗрсемпе ҫамрӑк хӗрарӑмсене пухнӑ та пурне те ирӗксӗрлесе пусмӑрланӑ, унтан 15 хӗрарӑма персе пӑрахнӑ.

* * *

Гитлерла Германире продовольстви тӗлӗшпе лару-тӑру кунран-кун начарланса пырать. Германи ҫӗршывӗнчи выҫлӑх ытларах та ытларах вӑйланать. Ҫав выҫлӑха пула Германире ачасем нумай вилме пуҫланӑ. Штаргард хулинче 1941 ҫулти декабрь уйӑхӗнче, 1940 ҫулти декабрьпе танлаштарсан, ачасем вилесси виҫӗ хут ӳснӗ.

* * *

Совет патриочӗ — Горькири станкозаводра ӗҫлекен старший мастер Побединский юлташ—фрезер станокӗ валли паха приспособлени шухӑшласа кӑларнӑ. Халиччен пӗр детале туса кӑлармa 8 сехет вӑхӑт кирлӗ пулнӑ, халӗ вара ҫав приспособленипе усӑ курса, ҫак вӑхӑт хушшинчех 48 детале туса кӑлараҫҫӗ. Побединский юлташӑн участокӗнчи стахановецсем ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстернӗ. Январӗн 5-мӗшӗнче, сӑмахран, фрезеровщик Пудкин юлташ сменӑри нормӑна 540 процент тултарнӑ. Тепӗр темиҫе кунран Пудкин юлташ нормӑна 1.620 процент тултарнӑ. Январӗн 10-мӗшӗнче фрезеровщик Платонов юлташ, приспособленипе усӑ курса, хӑйӗн нормине 2.290 процент тултарнӑ.

Январӗн 16-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 16-мӗш ҫӗрле ҫӗрле пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ активлӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Противник хыҫҫӑн йӗрлесе пырса, Говоров юлташӑн боецӗсем (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) халӑх пурӑнакан питех те кирлӗ 4 пункта йышӑнса илнӗ, тата тӑшманӑнне 2 танкетка, 6 оруди, 13 автоцистерна, тӗрлӗрен автомашинӑсем 11 машина, 4 станковӑй пулемет, 2 радиостанци, темиҫе трактор тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ.

Фронтӑн тепӗр участокӗнче Ефремов юлташӑн боецӗсем, противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, халӑх пурӑнакан 5 пункта йышӑннӑ тата тӑшманӑнне 3 танк, 22 оруди, 16 пулемет, 28 миномет, 53 автомашина, 78 велосипед, 2 радиостанци тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Федюнинский юлташӑн чаҫӗсенчен пӗри (Ленинград фрончӗ), противникпа хирӗҫ ҫапӑҫса, тӑшманӑнне 2 оруди, боеприпассем тиенӗ 4 лава тата наблюдательнӑй пункта пӗтерсе тӑкнӑ. Гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсем 280 ҫын вилнӗ.

* * *

Одманов лейтенант хӗрӳллӗ ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче пирӗн пулеметсен расчечӗсенчен пӗри стройран тухнине асӑрхаса илнӗ. Командир пулемет патне вырӑнӑ та ҫапӑҫу пынӑ хушӑра нимӗҫсен 40 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Часах пулемет сиенленнӗ. Гитлеровецсем Одманов юлташа ҫаварса илнӗ. Унтан хӑюллӑ командир винтовка алла илнӗ те, темиҫе хутчен персе, нимӗҫсен старший офицерне тата 4 салтакне вӗлернӗ. Тӗттӗм пулнипе усӑ курса, хастарлӑ командир хӑйӗн чаҫне таврӑннӑ, хӑйпе пӗрле тата аманнӑ икӗ боеца илсе ҫитернӗ.

* * *

Крым партизанӗсен П. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ гитлеровецсен Керчь патӗнчен чакакан чаҫӗсене атакӑланӑ. Партизансем нимӗҫсем ҫине пулеметсенчен пенӗ тата гранатӑсем вӑркӑнтарнӑ. Противник паникӑна ӳксе тарнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче хӑйӗн салтакӗсен 120 виллине, 6 автомашина, ҫар хатӗрӗсемпе боеприпассем тиенӗ 20 лав, радиостанци вырнаҫтарнӑ автобус, икӗ станковӑй пулемет, 5 мотоцикл, автоматсемпе винтовкӑсем тата патронсем нумай хӑварнӑ.

* * *

Унтер-офицер Г. Вейнер Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчен нумаях пулмасть Альфред Шефер патне ҫапла ҫырнӑ: «Пирӗншӗн питех те йывӑр кунсем ҫитрӗҫ. Шухӑшла-ха ӗнтӗ, Людвит Фран вилчӗ. Ҫапла, вата салтаксен речӗсем сайралса пыраҫҫӗ. Пӗр кун хушшинчех эпӗ хамӑн отделенири икӗ юлташа ҫухатрӑм. Манӑн нервсем тӳсеймерӗҫ. Нойгебауэра йывӑр амантрӗҫ. Флейсит, Сарсен, Шнейдер фельдфебельсем тата обер-фельдфебель Ростерман, ротӑн чи малтанхи йышӗнче пулнӑскерсем те, вилнӗ. Ҫавӑн пекех пирӗн батальон командирӗ подполковник Вальтер та пӗтрӗ. Кунсӑр пуҫне Анфт, Бортуш тата Коблишек аманнӑ. Мущик, Каспер, Лейбцель тата Конкрест вилчӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен ефрейторӗ Рейнгольд Букарт патне унӑн тусӗ Берлинран ҫапла ҫырать: «Апат-ҫимӗҫ питех те начар, ҫавӑнпа та организм тӑшмана хирӗҫ тӑма пултараймасть. Ҫанталӑк кӑшт улшӑнассӑнах—шӑнса пӑсӑлатӑн. Нихӑҫан та тӑраниччен апат ҫисе кураймастӑн, ҫавӑнпа та ӗнтӗ ҫапӑҫма нимӗнле кӑмӑл та ҫук».

* * *

Финлянди ҫӗршывне чуралантарнӑ нимӗҫсене финн халӑхӗ кураймани кунран-кун ӳссе пырать. Январӗн 3-мӗшӗнче Суоярви хулин районӗнче финсемпе нимӗҫ салтакӗсем хушшинче вӑйлӑ тытӑҫу пулса иртнӗ. Ҫав тытӑҫӑва комендантски рота пырса ҫитсе хӗҫпӑшалпа усӑ курса кӑна чарса лартма пултарнӑ. Тытӑҫура 27 ҫын вилнӗ тата аманнӑ.

* * *

Гемюнден хулинче (Германия) январӗн 10-мӗш ҫӗрле тенӗ чух ҫӗрле полици врачӗ 5 ҫын выҫӑхса вилнине палӑртнӑ.

* * *

Январӗн 8-мӗшӗнче Кафански рудникӗнчи (Армения) забойщик Рабаян юлташ руда кӑлармалли пӗр кунхи плана 1062 процент, Шаумян ячӗпе тӑракан рудникри бурщик Габриелян юлташ 1799 процент тултарнӑ. Январӗн 11-мӗшӗнче Шамлугски рудникӗнчи шахтер Михаил Сорокин сменӑри нормӑна 1960 процент, ҫав рудникӗнчи бурщик Абас Абульятас 1495 процент тултарнӑ.

Культсбор укҫине тӳлеҫҫӗ

КАЛИНИНО. Районри колхозниксемпе колхозницӑсем укҫа-тенкӗ парӑмӗсене срокчен тӳлесе татни нимӗҫ оккупанчӗсене татах та вӑйлӑнрах пырса ҫапни пулса тӑнине лайӑх ӑнланса илнӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ вӗсем укҫа-тенкӗ парӑмӗсене срокчен тӳлесе татма тӑрӑшаҫҫӗ. Коммунист Ландышев юлташ ертсе пыракан Чулкаҫри «Смычка» колхоз членӗсем пурте тенӗ пекех 1942 ҫулти культсбор укҫине парса татнӑ.

Хӑмӑш, Ҫавалкас Кӑкшӑм, Юнтапа тата ытти ялсоветсене кӗрекен колхоз членӗсем те культсбор укҫине тӳлесе татнӑ та ӗнтӗ. Кунти колхозниксем 2—3 кун хушшинчех культсбор укҫине 3000 тенке яхӑн пухнӑ. Финанс агенчӗ М. Ефремов юлташ колхозниксем хушшинче укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ.

Т. БЕЛОВ.

Хӗрлӗ Ҫар валли аш-какай

ҪӖРПУ. Ҫак кунсенче «Сталинцы» колхоз членӗсем «Цивильстрой» колхоз чӗнӗвне сӳтсе-яврӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли аш-какай хатӗрлеме колхозниксем икӗ ӗне, 10 сурӑх, 5 сысна самӑртма тытӑнчӗҫ. Колхозниксем Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр боецӗсем патне пӗр центнер сухари, 5 килограмм ҫу тата 50 килограмм махорка янӑ.

А. МИХЕЕВ.

* * *

ВАРНАР. «Большевик» колхоз членӗсем паттӑр Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли 100 чӑх, 10 сысна самӑртма тытӑнчӗҫ. Колхоз хӑйӗн ферминче Хӗрлӗ Ҫара пама 6 сысна самӑртать. Хӗрлӗ Ҫарӑн мухтавлӑ чаҫӗсем вӑрҫӑ фрончӗсенче тӑшмана паттӑррӑн пыра-пыра ҫапни колхозниксене чӗререн савӑнтарать. Паттӑр воинсен пысӑк ҫӗнтерӗвӗсене паллӑ туса, колхоз оборона фондне ҫӗнӗрен 100 центнер тырӑ, 2 центнер махорка, колхозниксем пӗр тонна ҫӗрулми пама йышӑнчӗҫ.

А. НИКОЛАЕВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Салачинӑри «Красный Октябрь» колхоз членӗсем Ҫӗрпӳ районӗнчи «Цивильстрой» колхоз пуҫарӑвӗ хыҫҫӑн Хӗрлӗ Ҫар валли выльӑхсем самӑртма тытӑнчӗҫ. Колхозниксем Хӗрлӗ Ҫар валли 5 така, пӗр пӑру, 35 чӑх самӑртаҫҫӗ.

Молякри «За коммунизм» колхоз членӗсем те Хӗрлӗ Ҫара ӗҫпе пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен хуҫалӑхӗсенчен Хӗрлӗ Ҫар валли пӗр вӑкӑр, чӑх-чӗпсем чылай, сыснасем самӑртса пама пулнӑ.

Я. СИГАЙ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Цивильстрой» колхоз чӗнӗвне ырласа, Шалчакасси ялӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем Е. Федоров, А. Иванов пӗрер сурӑх, А. Леонтьев пӗр сысна, Д. Федоров пӗр кӑвакал самӑртса Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли пама пулчӗҫ.

Г. ЕГОРОВ.

Танксен соединенине тума

Ишлейри «Новая сила» артель членӗсем тӑван ҫӗршыв оборонине тӗреклетессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем РСФСР Промкооперации ячӗпе тӑракан танксен соединенине тума 600 тенкӗ укҫа пухса панӑ. Кунсӑр пуҫне артель членӗсем укҫа-тенкӗпе япала лотерейин билечӗсене 210 тенкӗлӗх ҫыранса, укҫине ҫийӗнчех тӳлесе татнӑ.

Г. МАТВЕЕВ.

Колхозсем государствӑна тырӑ сутаҫҫӗ

КАНАШ. Районри колхозсем государствӑна кооператив урлӑ тырӑ сутма тытӑнчӗҫ. Ҫак кунсенче государствӑна кооператив урлӑ «Мотор» колхоз 41 центнер, «Хӗрлӗ хӗм» колхоз 88 центнер, «Ударник» колхоз 25 центнер тӗштырӑ сутрӗҫ.

И. МАЛОВ.

Йӗлтӗрҫӗсен кросне хатӗрленетпӗр

ВАРНАР. Профсоюз членӗсемпе комсомолецсен Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа пулакан кросне ирттерме хатӗрленес ӗҫ районра анлӑн сарӑлса кайрӗ. Районра 5 ҫынтан оргкомитет суйланӑ. Оргкомитет ӗҫе хӗрӳллӗн тытӑнчӗ. Ҫак кунсенче ятарласа 12 ҫынна курсран вӗрентсе кӑларнӑ. Вӗсем халӗ инструкторсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Йӗлтӗрпе ҫӳрес тӗлӗшпе тренировкӑсем пулса иртеҫҫӗ. Анчах районра йӗлтӗрсем ҫитмеҫҫӗ. Ҫавӑнпа оргкомитет халь йӗлтӗрсем тӑвас ӗҫе пуҫарса ячӗ. Синдимиркинӑри «Гигант» колхозра комсомолецсем тата кроса хутшӑнакансем валли йӗлтӗрсем туса ҫитернӗ. Колхоз председателӗ Бардасов юлташ йӗлтӗрсем ҫитмен комсомол организацийӗсене йӗлтӗрсем туса пама пулчӗ. Кунта йӗлтӗрсем тӑвакан мастерской организациленӗ.

Ҫавӑн пекех районри «Трудовик» артелӗн катка-пичке тӑвакан цехӗ те халь йӗлтӗрсем тӑвать.

Н. ЗАХАРОВ.

* * *

Профсоюз членӗсемпе комсомолецсен йӗлтӗрлӗ кросне хатӗрленсе ирттерес тӗлӗшпе Н-ски заводри рабочисем Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑри рабочисемпе служащисене социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗннӗ. Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑра ӗҫлекенсем вӗсен чӗнӗвне йышӑннӑ, тепӗр кунхех 12 ҫын тренировкӑна тухнӑ. Ҫавӑн пекех тӗрӗ тӗрлекен артельре ӗҫлекенсем те тренировкӑллӑ занятисем туса ирттереҫҫӗ. Ҫак кунсенче кӑна 10 ҫын тренировкӑра пулчӗҫ.

Н. ГРИГОРЬЕВ.

Нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ совет районĕсенчи арçынсене вĕлерсе пĕтересси çинчен панă тискер приказ

Пирĕн войскăсем Калинин хулине нимĕç оккупацийĕнчен тасатнă хыççăн гестапăн (нимĕçсен охранкин) архивне тупнă. Ку архива нимĕçсем илсе тухса кайма ĕлкĕреймен. Çак архивра нумай документсем хушшинче Германин 6-мĕш армин командующийĕ генерал-фельдмаршал фон Рейхенау 1941 çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче «Войскăсем Хĕвелтухăçĕнче хăйсене тыткаласси çинчен» панă приказа тупнă. Çав приказа пĕрле тылри 102-мĕш çар округĕн начальникĕ çумĕнчи охраннăй полицие СД начальникĕн уполномоченнийĕн канцелярийĕ ярса панă документ кăтартса панă тăрăх, генерал-фельдмаршал фон Рейхенау приказне Гитлер ырланă пулнă.

Нимĕç çарĕн салтакĕсене вырăс халăхĕн [illegible] мĕнпур культурăллă тата историллĕ пурлăхсене пĕтерсе тăкма, нимĕçсем йышăнса илнĕ совет хулисенче [illegible] вĕлерсе пĕтерме чĕнекен Рейхенау приказĕ [illegible]. Унăн содержанине мĕнпур совет çыннисен, мĕнпур цивилизациллĕ тĕнчен пĕлмелле. Çав приказа илсе пичетлетпĕр:

«ВОЙСКĂСЕМ ХĔВЕЛАНАÇĔНЧЕ ХĂЙСЕНЕ ТЫТКАЛАССИ ÇИНЧЕН»

Большевикла система çине мĕнле пăхас тĕлĕшпе халĕ нумай чухне уçăмлах мар шухăшсем пур-ха. Большевикла системăна хирĕç пуçласа янă походăн тĕп тĕллевĕ государство вăй-хăватне пĕтĕмпех аркатса тăкасси тата Европа культури çине Азия хăйĕн влиянине панине пĕтерессипулса тăрать. Çакăн пирки те ĕнтĕ войскăсем умне воинăн яланхи обязанноçĕсенчен чылай анлăрах задачăсем тухса тăраççĕ. Тăшмана хирĕç фронт линийĕн тулашĕнче кĕрешесси çине халĕ çителĕклипех пăхмаççĕ-ха. Ултавлă та хаяр партизансене, йĕркерен тухнă хĕрарăмсене халĕ те тыткăна илме пăрахман. Çурма çар çынни пек çынсем çине е засадăра ларакан граждăнла тумланнă уйрăм стрелоксем çине тата тĕрлĕ çапкаланчăксем çине халĕ те чăн-чăн салтаксем çине пăхнă пек пăхса, вĕсене çар çыннисене тытса усрама тунă лагерьсене ăсатаççĕ.

Тыткăна лекнĕ вырăс офицерĕсем йĕрĕнчĕклĕн тăрăхласа каласа панă тăрăх, советăн агенчĕсем урамсем тăрăх ирĕклĕнех çÿреççĕ тата час-часах нимĕçсен походнăй кухнисенче апатланаççĕ. Войскăсем хăйсене çакăн пек тыткаланине вăрçă çине питĕ çиелтен пăхнипе çеç ăнлантарса пама пулать. Руководствăн халĕ çак вăрçăн чăн-чăн тĕллевĕ çинчен ăнлантарса пама вăхăт.

Вырăнти халăха тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене апат-çимĕç парасси вăл кирлĕ мар çĕрте çемçе чĕреллĕ пулни пулса тăрать.

Тăван çĕршыв хăй çимесĕр тăрса, питĕ пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе фронта ярса панă япаласене, ку япаласем трофейăсем пулсан та, салтакăн вĕсене пĕрне те тăшмана валеçсе памалла мар: вĕсем пирĕн снабженин питĕ кирлĕ пайĕ пулса тăраççĕ.

Войскăсен çар чаçĕсене тăма кирлĕ суртсенчи пушарсене çеç сÿнтерме тăрăшмалла. **Ыттисене пурне те,** большевиксем ĕлĕк пуçпулса пурăннине кăтартакан символ пулса тăраканскерсене, вăл шутрах çуртсене те **пĕтерсе тăкмалла. Хĕвелтухăçĕнчи нихăçле историлле тата художествăллă паха япаласем те нимĕнле вырăн та йышăнса тăмаççĕ.**

Çарпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен паха чĕртаварсене тата промышленноçлă объектсене сыхласа усрас тĕлĕшпе руководство уйрăм кăтарту парать. Çапăçакан чаçăн тылĕнчи халăхран мĕнпур хĕçпăшала туртса илмелле. Фронт çывăхне хĕçпăшалпа боеприпассене илсе пымалли çул вăрăммине [illegible] пула, илнĕ хĕçпăшалпа [illegible] чухне, противникан тытса илнĕ хĕçпăшалне тата боеприпассене [illegible] усă курмалла. Çапăçу условийĕсене пула кун пек тума май килмест пулсан, хĕçпăшала [illegible] пăрахмалла.

Çарăн тылĕнче уйрăм партизансем хĕçпăшалпа усă курассă пулсан, вĕсене тĕлĕштех хаяр та татăклă мерăсем йышăнмалла. Пирĕн çине тапăнас хăрушлăха пĕтерсе тăнас тесе, ытти арçынсене те [illegible] çаканашкал мерăсем йышăнмалла.

Совета хирĕçле нумай йышлă элементсем, ушăнчусем пуласса кĕтсе пурăнакансене, пассивлăхне ăнлантару майĕсемпе пĕтерсе, вĕсене большевизма хирĕç кĕрешес ĕçе активлă хутшăнтармалла. Вĕсем çакан пек тума килĕшмеççĕ пулсан, вĕсем вара Совет [illegible] çынсем çине пăхнă пекех пăхнишĕн ан ÿпкелешчĕр.

Германия тăвакан мероприятисем халăха большевиксен çапкаланса çÿрекен юлашкийĕсем хăранипчен вăйлăрах хăратмалла.

Малалла мĕн пуласси çинчен политика тĕлĕшĕнчен шухăшламасăрах, салтакăн икĕ тĕрлĕ задачăна пурнăçа кĕртсе пымалла:

1) большевикла ерĕçе, совет государствине тата унăн хĕçпăшаллă вăйне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалла;

2) тăшманăн чеелĕхĕпе хаярлăхне нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пымалла, çапла вара Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен Российăри пурнăçне хăрушсăрлăхра тытса тăма май памалла.

Çакăн пек майсемпе çеç эпир Германи халăхне Азипе Европа хăрушлă. хĕнчен ĕмĕрлĕхех хăтарас тĕлĕшпе хамăр çине хунă историлле миссие пурнăçа кĕртме пултаратпăр.

Главнокомандующи фон Рейхенау
Генерал-фельдмаршал».

Çапла ĕнтĕ, Гитлерпа унăн тарçисем хăйсен салтакĕсене нимĕç войскисем йышăнса илнĕ территорисенчи мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтерме, халăхран çăкăрпа шыва туртса илме, истори, культура тата искусство памятникĕсене пĕтерсе тăкма приказ панă, урăхла сăмахсемпе каласан, вырăс нацине, украинецсене, белоруссене тата Совет Союзĕнче пурăнакан ытти халăхсене те пĕтерсе тăкма приказ панă. Гитлерăн çав çынçиенле приказне пурнăçа кĕртсе пырса, варварсен, пусмăрçăсен тата çынвĕлеренсен банди пирĕн тыткăна лекнĕ боецсене вĕлерсе пĕтерет, вуншар пин мирлĕ çынсене — арçынсене, хĕрарăмсене, ача-пăчасене, стариксене асаплантарса вĕлерет, хĕрсене ирĕксĕрлесе пусмăрлать, хуласемпе ялсене, шкулсене, клубсене, библиотекăсене сунтарса ярать, культура историйĕн «Новый Иерусалим» евĕрлĕ памятникĕсене сирпĕтсе аркатать, вырăс халăхĕн генийĕсене — Лев Николаевич Толстоя, Чайковские, Украина халăхĕн генине — Тарас Шевченкăна аса илтерекен япаласене çĕрпе танлаштарма тăрăшать.

Нимĕç захватчикĕсем пĕтерсе тăкмалли вăрçă тăвасшăн пулчĕç. Вĕсем ăна туянчĕç. Гитлер бандичĕсем совет халăхне хăратса ÿкересшĕнччĕ; çакна хирĕç курайманлăх, халăх тарăхăвĕпе хаярлăх, нимĕç захватчикĕсен çарне кирек епле пулсан та аркатса тăкакан никам тытса чарайми вăй-хăват çĕкленчĕ.

Нимĕç захватчикĕсем пирĕн çĕршывра çавтери тискер преступленисем туни вĕсем пуçĕпех пĕтес вăхăта çывăхартать кăна.

СОВИНФОРМБЮРО.

Медынь хулишĕн çапăçни

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, январĕн 14-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Совет Информаци Бюровĕ пирĕн войскăсем Медынь хулине илни çинчен пĕлтерчĕ. Кунта эпир çав хулашăн пынă çапăçусем çинчен тĕплĕнрех каласа паратпăр.

Мало-Ярославец—Медынь участокĕнче çапăçусем питех те хаяррăн пулса пынă. Совет войскисем хĕссе пынине чарса лартас тесе, тăшман инженерла чăрмавсем нумай туса хунă тата артиллери чылай нумай пухса тăратнă. Анчах совет воинĕсем, Протва шывĕ урлă каçса тата Мало-Ярославец хулине илсе, никам чармалла мар малалла кайса пынă. Противник халăх пурăнакан кашни пунктшăн çапăçнă. Çапăçусем кунĕн-çĕрĕн пынă. Тăшман, пирĕн атакăсене тытса чăраймасăр, хĕвеланăç еннелле чакнă, халăх пурăнакан пунктсене çунтара-çунтара хăварнă. Пушарсен çутисем юнпа пĕвеннĕ фашистла бандитсен çулне палăртса тăнă.

Медынь патне пымалли вырăнсенче çапăçусем çĕнĕрен вăйланса кайнă. Тăшман çав хула тавра вăйлă чăрмавсем, ДЗОТ-сем туса лартнă, хула патне пымалли вырăнсене мина[illegible] хурса тухнă тата çав вырăнсенче мĕнле пемеллине малтанах персе сăнаса хунă. Совет войскисем çав чăрмавсене тата артиллерирен, миномётсенчен пенине вăйлăн сирсе пынă. Пирĕн стрелковăй чаçсенчен пĕри танксем пулăшнипе Медынĕн хĕвелтухăç хĕррине пырса тухнă. Тепĕр часть, хуларан тавраран иртсе кайса, унăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕррине çĕмĕрсе кĕнĕ.

Хула патне пымалли вырăнсенче çапăçнă чухне уйрăмах Филимонов красноармеец хăйĕн хастарлăхне палăртнă. Е. ялĕнче нимĕçсен пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсем тăнă. Филимонов юлташ тăшмана курăнмасăр çав яла пырса кĕнĕ те, пĕр çуртăн чартакне вырăнаçса ларса, пĕр çурт патĕнчен тепĕр çурт патне чупкаласа çÿрекен гитлеровецсене снайперла вут-çулăмпа ăшалантарма тытăннă. Малтанхи пульăсемпех вăл 10 нимĕçе вĕлерсе пăрахнă. Тăшмансем хăюллă боеца курнă та вăл ларакан пÿрте вут тивертсе янă. Герой хăраса ÿкмен, вăл пирĕн чаçсем пырса çитиччĕнех тăшмана ялкăшакан çулăм витĕр персе сиенлесе тăнă.

Медынь патне пымалли вырăнсенче çапса аркатсан, нимĕçсен чаçĕсем хулана тарса кĕнĕ. Вĕсем çавтери хăвăрт тарнă, нимĕçсен пĕр пехотнăй дивизийĕн штабĕн офицерĕсем питĕ паха оперативнăй документсене те илсе кайма ĕлкĕреймен.

Медынь хулин хĕррисенче пĕр талăк хушши хаяр çапăçусем пынă. Варшава çулĕ хулана пырса кĕнĕ вырăнта нимĕçсем автобуссем, грузовой тата çăмăл автомашинăсем, темĕн чухлĕ мотоцикл, урапасем тата велосипедсем йăвантарса купаласа хунă. Пирĕн боецсем çав чăрмавсене çĕнтерсе илнĕ те вара чул çуртсемпе подвалсенче пытанса тăракан нимĕç автоматчикĕсемпе пулеметчикĕсене пĕтерме тытăннă. Кашни урама, кашни çурта атака туса тытса илме тивнĕ.

Пирĕн войскăсем хĕсесси сехетрен сехете вăйлăланса пынă. Хулана тытса тăма çуккине курса, тăшман çĕрле хăйĕн чаçĕсене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хуларан кăларма тытăннă. Хулана пушарсен çути çутатса янă. Нимĕç оккупанчĕсем тата тепĕр усал ĕç турĕç: вĕсем Медынь хулине пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕмĕрсе тăкрĕç, çунтарса ячĕç.

Совет воинĕсем хулана нимĕç оккупанчĕсенчен тасатрĕç. Хула патне пымалли вырăнсемпе хула урамĕсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен çĕршер виллисемпе витĕнсе юлнă. Пирĕн алла трофейăсем нумай лекнĕ: танксем, автомашинăсем, орудисем, пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем тата çар снаряженийĕпе боеприпассем.

И. ГРИБОВ.

Гитлерла аркатуçăсен приказĕсем

Гитлеровецсем Курск облаçĕнчи Солнцево илне пырса кĕрсенех, çуртсемпе хÿмесем çинче юн ĕçме юратакан алăпа çырнă пĕлтерÿсемпе приказсем курăна пуçланă. Акă, нимĕçсем кăларса çапнă приказсенчен пĕри:

«Партизансене пытарса, тăрантарса усракансене персе пăрахаççĕ. Пирĕн приказа пĕлтернĕ хыççăн чугунçул тăрăх, базăсен, складсен, учреждениесен территорийĕсенче çÿрекенсене персе пăрахаççĕ. Германи çарĕн штабĕ старостăсемпе сотскисем урлă паракан приказсемпе распоряженисене хирĕç саботаж тăвакансене персе пăрахаççĕ. 18 сехет иртнĕ хыççăн урамра, пахчара, уйра çÿрекенсене персе пăрахаççĕ. Тивĕçлĕ распоряжени илмесĕр вăрмантан киле вутă илсе килекенсене персе пăрахаççĕ».

Кăштах вăхăт иртсен татах тепĕр приказ кăларса çапнă. Çав приказра Солнцево ялĕнчи çынсене хăйсен аллинчи мĕнпур пăшалсемпе боеприпассене, патронсене, тара, гранатăсене, дробе т. ыт. те пама хушнă. Германи çарне кирлĕ пур тĕрлĕ пурлăха та: тĕслĕхрен, тарасасене, михĕсене, пырпула, утта, краççина, бензина, лампăсене, савăт-сапасене, клеенкăсене, штрăсемпе занавескăсене, коверсене, патефонсемпе вĕсен пластинкисене комендантурăна пырса памалла пулнă. Çав приказа пăснăшăн персе пăрахаççĕ, тесе асăрхаттарнă.

Гитлерăн бандичĕсем çав приказа çине тăрсах пурнăçа кĕртсе пынă. Вĕсем мирлĕ халăха пĕтерсе пынă, кăйсене вăрă-хурахланма чармакан кăштах та пулин хирĕç тăраканнине кашнинех нимĕн хĕрхенмесĕр пере-пере пăрахнă.

У. ЖУКОВИН.

Крымри çапăçусем

Крымра фашистсене хирĕç хĕрÿллĕ çапăçусем пыраççĕ. Тăшман оборона рубежĕсенче тытăнса тăма тăрăшать, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем таптаса пынинчен çĕре чакаланса лармa хăтланать. Пирĕн пехота, артиллери тата авиаци оккупантсене тĕппипех пĕтерсе пыраççĕ. Совет Крымĕшĕн кĕрешнин историне пирĕн летчиксем чылай паттăр страницăсем çырса хăвараççĕ. Майор Осадчий хăйне хушнă боевой задание пурнăçланă чухне [illegible] самолечĕпе тĕл пулнă. Кунта «Юнкерс-88» тата «Мессершмитт-109» йышши самолетсем пулнă. Осадчий юлташ çухалса кайман, хăвăрт çавăрăнса тăшман самолечĕсем патнелле вирхĕннĕ. Вĕçсе çитсен, питĕ ăста çавăрăнса илнĕ те тăшмана атакăланă. Вăл тăшман самолечĕсен хыçне тухнă, татах атакăланă — фашистсен пĕр самолечĕ çавăнтах çĕрелле кĕмсĕртетсе ÿкнĕ. Ытти самолетсем, хăюллă летчикран хăраса, каялла çавăрăнса тарнă. Çакăн хыççăн майор Осадчий, командовани панă задание пурнăçа кĕртнĕскер, тĕрĕс-тĕкеллĕнех хăйĕн чаçне таврăннă.

Крымран чакакан фашистсен çулне татас тесе, лейтенант Потапов ертсе [illegible] тăнă: вичкĕн çил вĕрнĕ, пĕлĕтлĕ пулнă, [illegible] курăнман. Анчах та сталинла соколсем хăйсен машинисемпе хушнă вырăна хăвăрт вĕçсе çитнĕ. Акă çинçен тăсăлса выртакан кĕпер курăнать. Самолетсем ун тĕлне вĕçсе пыраççĕ. Бомбăсем аялалла чăмаççĕ. Вĕсем çĕре ÿксе çуралаççĕ — кĕпер те çавăнтах сирпĕнсе вăркăнать. Задани пурнăçа кĕрет.

НИКИТИН.
(«Правда», январĕн 13-мĕш).

ТАМАРА КАУНИНА

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вăл хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. Тин 17 çул тултарнăскер, вăл боецсен суранĕсене тиштерлĕн çыхса янă. Кунта боецсем ăна хăйсен тăван йăмăкĕ вырăнне шутланă. Юратнă тăван йăмăкĕ вĕсен çунса тăракан вĕри çамкисене ачашшăн перĕннĕн туйăннă.

Пĕр пысăк та хĕрÿллĕ çапăçу хыççăн çак медсестрана, Тамара Павловна Каунинăна, аманнă боецсемпе командирсене çапăçу хирĕнчен санитарнăй автомобильпе илсе тухма хушнă пулнă. Машина çинчи пысăккăн сăрласа ÿкернĕ Хĕрлĕ хĕрессем аякранах курăннă, ку мĕнле машина иккенни паллах пулнă. Тен, çавăнтах пулас, çавна кура-тăрах фашистсем ку машинăна аркатса тăкма, аманнă совет боецĕсене пĕтерсе тăкма шутланă. Тăшманăн 7 самолечĕ çул тĕлĕнче явăнса вĕçсе пынă. Санитарнăй машинăна курсанах, вĕсем аялалла анма тытăннă. 100 метра, 50, 40, 15, метра çитиех аннă. Самолетсем çĕре çитсе перĕннĕпе пĕрех пынă. Çавăн пек аялтан пырса, тăшманăн 7 çăханĕ санитарнăй машина çине вут чĕртсе яракан снарядсем тăкнă, калла тавăрăна-тавăрăна пенĕ. Тамара сывлама чарăнса хăй вырăнĕнче ларса пынă. Аманнисем йывăррăн ахлатнă, йынăша-йынăша илнĕ. Тамара вĕсен пичĕкисене юсанă, флягăран шыв ĕçтернĕ. Аманнисене кун хыççăн кăштах çăмăллăн туйăннă, вĕсем ахлатма чарăннă. Самолетсем тата тепĕр таппхăр персе тухнă хыççăн машинăна вут хыпса илнĕ. Вăл, питĕ пысăк кăвайт пек, ялкăшса çуннă. Аманнисем нихçта кайса кĕреймн хыпкаланса ÿкнĕ, вĕри сывлăшпа пăчăхса асапланнипе хăшĕсем машинăри çÿлĕксем çинчен персе аннă, суран çыххисене салта-салта пăрахнă.

Пĕр самантра, пĕрре куç хупса илнĕ вăхăтра тенĕ пек, Тамара çухалса кайса, аптраса тăчĕ. Çавăнтах вут-хĕм çавăрса илнĕ машинăран сиксе тухрĕ:—Вăрмана тăмас, тарса хăтăлас ку вилĕм аллинчен! Анчах... ăçта? Мĕн эпĕ?—Хĕр, çавăнтах ăна кĕрсе, хăйне алла илчĕ.

— Аманнисене, хăвăн аллуна шанса панă çынсене, пăрахса тармалла-и? Комсомолка—хăй ирĕкĕпе çар ретне тăнă çын! Апла юрать-и? Пурăнма тивĕçлĕ-и эсĕ ун пек тунă хыççăн? Мĕнле куçпа пăхăн вара эсĕ çынсен куçĕнчен?—Тÿрех каялла, машина ăшне вăркăнчĕ хĕр. Сирĕпленсех çитеймен çамрăк аллисемпе вăл аманнă боецсене çĕкле-çĕкле тухма тытăнчĕ. Шофер ăна пулăшать. Анчах çав вăхăтрах тăшман самолечĕсем каллех тавăрăнчĕç, çунакан машина çинелле татах переççĕ. Шофера лекрĕ. Çавăнтах тĕшĕрĕлсе анчĕ вăл—вĕлерменлех лектерчĕ ăна тăшман.

Вăрман хĕрринче, тăшман самолечĕсен пульли айĕнче ялкăшса çунакан машинăра сывви Тамара халĕ пĕр пĕччен тăрса юлчĕ. Йывăр аманнă 15 боец пурнăçĕ унăн аллинче. Вуншилĕк хутчен Тамара çунакан грузовик ăшне кĕрсе тухрĕ. Вĕри çулăм антăхтарса ярать, пăчăхса вилмелле. Аманнă боецсен кĕлеткисем пысăк та йывăр. Çĕклесе пынă чухне сывлăш çавăрса илме çук. Çапах та Тамара вĕсене çĕкле-çĕкле, вăрман сывăхне, лапама леçет. 15 хутчен хутларĕ вăл çак хушша. Пырсан-пырсан, сывлăш çавăрса илмешкĕн, вут хыпса илнĕ кĕпине сÿнтерме чарăнса тăрать. Çавăнтах мĕнпур вăйне пухса, хăйĕн хаклă çĕклемĕсене малалла куçарать. Вăй-хал çитейрес çук пек ку ĕçе, этем вăй-халĕ çĕнсе илмелле мар пек туйăнать вăл, анчах та чăн-чăн çын, ĕçе чун-чĕререн парăннă этем, вут-хĕме, фашистсен 7 çăханне, вилĕме çĕнтернĕ хăюллă та хастар хĕр ăна тума пултаратех, пултарнă та. Аманнă боецсенчен хăшĕрисем пачах тăнран кайнă, хăшĕсен куçĕсене уçса пăхмалăх вăйĕ пулнă.

Хăйсене çăлакан çамрăк хĕр çине вĕсем тĕлĕнсе, паттăрлăхне тем пек хаклăн кăмăлласа, чун-чĕререн таз туса пăха-пăха илнĕ.

Тамара 15 çынна пурне те вăрман хĕррине çĕклесе леçнĕ. Ку хушăра машина çунса пĕтĕпе пĕрех тĕлкĕшсе выртса юлнă. Хăй çинчи йăсăрланса тăракан тумне çурса ывăтса, пиçсе кайнă ÿт-тир тÿсмелле мар ыраттине пăхмасăрах, вăл, чупса, хушăран упалене-упалене, пулăшу пунктне патне çитнĕ. Хашка-хашка вăл, аран сывлăш çавăркаласа илсе, çурма сасăпа аманнисем ăçта выртни çинчен пĕлтернĕ те тăнран кайнă.

Аманнисене 15 çынна пурне те çăлнă. Вĕсене госпитале илсе кайнă. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсене геройла çăлакан пĕчĕк хĕрĕн ятне те пĕлеймесĕрех юлчĕç пулĕ. Вăл—Тамара Каунина. Эсир нихăçан та манас çук вăл ята.

Хытă пиçсе кайнăскер тата шăнса пăсăлнăскер, вăл питĕ вăйлă чирлесе, вилес пекех выртнă. Ăна хăвăртрах самолет çине лартса госпитале леçнĕ, вилĕм аллинчен хăтарнă ăна. Боецсемпе командирсем, вăл сире вилĕмрен çăлса хăварнă пекех, ăна та çăлса хăварчĕç. Пурăнать вăл. Тăшмана çапса çĕмĕрнĕ хыççăн пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх мастерĕсем мухтавлă çĕнтерÿçĕсен памятникне лартнă чухне, вĕсем паттăр воинсен—Гастеллăпа Мамонтов кĕлеткисемпе юнашар, харсăр герой-летчиксемпе, танкистсемпе, стрелоксемпе, саперсемпе юнашар çакă çанă çинче Хĕрлĕ хĕрес паллиллĕ тум тăхăннă пĕчĕк хĕрĕн, Тамара Каунина комсомолкăн кĕлеткине те туса лартĕç. Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи Военнăй Совет приказĕ тăрăх Тамара Павловна Каунина комсомолкăна Ленин орденĕ панă.

А. ИСБАХ,
Батальоннăй комиссар
ЗЛАТОПОЛЬСКИЙ.

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ОПЕРАЦИЙĔСЕМ ÇИНЧЕН ЮТÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлă наступленийĕ çинчен çырнă май «Нью-Йорк уорлд телеграмм» хаçат çапла пĕлтерет: «Лайăх информацисем килсе тăракан пĕртен-пĕр фронт халĕ те çав-çавах Россия пулса тăрать». Германие «çĕнтерекенни çук» текен халлапа вырăссем пĕтерсе тăкрĕç. Вĕсем халĕ ĕнтĕ темĕн чухлĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене, танксене, орудисене, самолетсене тата Германин ытти хĕçпăшалĕсене пĕтерсе тăкнă. Противникăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкасси чи паллă вырăн йышăнса тăрать. Çынсем тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те çакăн пек çухатусене Германи пуçласа тÿсет-ха. 1942 çулти мĕнпур событисен ăнăçăвĕ ĕнтĕ чылаях Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче операцисем мĕнле аталанса пынинчен килет».

* * *

СТОКГОЛЬМ, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Швецин «Свенска морген бладет» хаçачĕ вăрçă ĕçĕсене пăхса тухнă май, Хĕрлĕ Çар çаплах наступлени туса пырать, тесе çырать. Вырăссем пуçарулăха хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Германи салтакĕсен положенийĕ савăнмаллах мар. Каялла чакни Германи çарне шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен япăхлантарса пырать. Вырăс войскисен, вĕсем противника хăйсен тăван çĕршывĕнчен хăваласа кăларасишĕн кĕрешнĕ пирки, шухăш-кăмăлсем çирĕпленсех пыраççĕ. Нимĕçсем халĕ те «арьергардри çапăçусем» çинчен, «хĕллехи лини патнелле» куçни çинчен калаççĕ-ха. Анчах та хĕллехи линие хĕлле тума питĕ йывăр. Вырăссем нимĕçсене сывлăш çавăрма та памаççĕ.

Венгри халăхĕ гитлеровецсене кураймасть

АНКАРА, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Германи войскисем поражени тÿснисем çинчен мĕнпур Венгрийĕпех сăмах вĕççĕн те, пичет урлă та хыпар сарăлать. Нимĕçсен «Националь цейтунг» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, юлашки кунсем хушшинче Венгри полицийĕ 259 çынна арестленĕ. Вĕсене халăх хушшинче «лайăх мар сăмахсем» сараççĕ тесе айăплаççĕ.

Америка хаçачĕ «Крисчен сайенс монитор» çапла пĕлтерет: Венгрири рабочисем юлашки вăхăт хушшинче Германи çарĕ валли ĕçлесе тăракан 6 пысăк фабрикăсемпе заводсене аркатса пăрахнă, çав шутра пĕр резина фабрики, пысăк хими завочĕ, Печ çывăхĕнчи пысăк фабрика, Будапештри пир-авăр фабрики тата подъемнăй машинăсем тăвакан завод кĕреççĕ.

Польша партизанĕсен кĕрешĕвĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Швецире тухса тăракан «Дагенс Нюхетер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Польшăра партизансен кĕрешĕвĕ вăйланса кайнă. Партизансем Германи салтакĕсемпе офицерĕсем çине тапăнаççĕ, çар транспорчĕсене пĕтерсе тăкаççĕ. Краковра тухса тăракан «Краковски вести» хаçатăн юлашки номерĕнче нимĕçсем Люблинра хăйсене пулăшма тунă полицин виçĕ унтер-офицерĕ çинчен некрологсем пичетлесе кăларнă. Хаçат çырнă тăрăх, çав унтер-офицерсем «хăрушă обстоятельствăра», урăхла каласан, Польша партизанĕсен аллинчен вилнĕ.

Çавнашкалах тата «Крануэр цейтунг» хаçат та çапла пĕлтерет: иртнĕ кунсенче çеç партизансен отрячĕ Варшава çывăхĕнче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне каякан çар эшелонĕ çине пăпалсенчен пенĕ.

Тербовен Норвеги офицерĕсене арестлеме приказ панă

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Гитлер войскисем Норвегие оккупациленĕ хыççăн Норвеги çарĕн офицерĕсенчен нумайĕшĕсем Англие тарнă та Норвегие Германи захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешĕве хутшăннă. Çав офицерсенчен пĕр пайĕ англичансем юлашки вăхăтра Норвеги çыранĕсем çине кайса килнĕ çĕре хутшăннă.

Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Гитлерăн Норвегири наместникĕ Тербовен Норвеги çарĕн, флотĕпе авиацийĕн Норвегире пурăнакан пур офицерĕсене те арестлесси çинчен приказ панă. Тербовен чи малтан Германи влаçĕсене хирĕç тăнăшăн Норвеги аслă сучĕн 20 членне концентрациллĕ лагере янă.

НИМĔÇСЕМ ФРАНЦИ УЧЕНАЙНЕ ВĔЛЕРНĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). «Франция калаçать» ятлă журнал пĕлтернĕ тăрăх, нумаях та пулмасть нимĕçсем Парижра Францин паллă ученăйне профессор Хольвека вĕлернĕ.

ЮНАЙТЕД ПРЕСС АГЕНТСТВИ ФЕЛЬДМАРШАЛ ФОН БОКА АРЕСТЛЕНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германин Скандинавири паллă çар çыннисем каланă тăрăх, фельдмаршал фон Бока Берлин çывăхĕнче «килти арестра» тытса усраççĕ.

Пĕлтерÿ

Январĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпунктĕнче докладчиксем, агитколлектив руководителĕсемпе агитаторсем валли инструктивнăй доклад пулать. Докладăн теми: «Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче кĕрешсе нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкатпăр».

Докладчик—ВКП(б) хула комитечĕн лекторĕ, экономика наукисен кандидачĕ **Н. П. Фролов.**

Доклад итлеме ирĕклĕн кĕртеççĕ.

Агитпункт адресĕ: Чувашская урамĕ, 6-мĕш №-лĕ çурт.

ВКП(б) Хула Комитечĕн агитпункчĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ОБЪЯВЛЕНИЕ

Чебоксарскому ликероводочному заводу

ТРЕБУЮТСЯ:

бондари, опытный тракторист, механик для двигателя внутреннего сгорания, столяр, рабочие и работницы.

Оплата сдельная.

С предложением обращаться: Чувашская улица, № 61, ликероводочный завод, к главному инженеру.

ЧЕБОКСАРСКИЙ
КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ
объявляет дополнительный прием студентов на I, II и III курсы
НА 1941—1942 УЧЕБНЫЙ ГОД

Техникум готовит техников-строителей по промышленному и гражданскому строительству.

Срок обучения 3 года. Прием заявлений с 5 января по 25 января. К заявлению должны быть приложены следующие документы:
а) автобиография;
б) свидетельство об окончании НСШ (в подлиннике);
в) три фотокарточки (снимок без головного убора);
г) свидетельство о рождении;
д) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных);
е) паспорт предъявляется при личной явке.

На первый курс принимаются без испытаний:
а) окончившие НСШ в 1941 году;
б) 8 и 9 классы средней школы.

На второй курс принимаются без испытаний окончившие полную среднюю школу (десятилетка, рабфак, училище, школа для взрослых) с условием обязательной сдачи в течение второго семестра общетехнических и специальных дисциплин, входящих в программу первого курса.

На третий курс принимаются ранее учившиеся в техникуме и не окончившие его по каким-либо причинам.

Студенты общежитием не обеспечиваются. Приезжим оплачиваются квартирные в размере 20—25 рублей в месяц.

Начало занятий 8-го февраля 1942 года.

Заявления направлять по адресу: г. Чебоксары, Чувашской АССР, улица Ярославская, 54. Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум.

Для ответов должны быть вложены в конверты почтовые марки на 60 коп.

ДИРЕКЦИЯ.

3—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителен — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23 «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательстве конторин—0—23.

НТ 13

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 58—84 п. л.